Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 59 (4628) *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 27-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

**Майăн 25-мĕшĕнче шкулсенче юлашки шăнкăрав янăрарĕ.**

**Çак пысăк уява халалланă материалсене 2-мĕш страницăра вулăр.**

## Ĕç вĕçленет, паттăрсен шучĕ чакмасть

Сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнчи **Сергей ИВАНОВ** хушма лаптăксем çинчи хутăш апатсем акнă çĕрте кунне виçĕ норма пурнăçланă.

* * *

"Тĕрнеç" хуçалăхри **Валерий ДМИТРИЕВ** кăçалхи çуркунне 715 гектар çинче тырă акнă, унăн ĕçри юлташĕ **Рафаэль ВАЛИТОВ** - 660 гектар çинче.

* * *

"Киклĕ" ассоциацири **Касым АШТРАПОВ** кăçал 640 гектар çинче пĕрчĕллĕ культурăсем акнă.

Çак хуçалăхри **Рафик ШАРАПОВ** пĕр кунра 35 гектар кукуруза акса, смена нормине 250 процент тултарнă. Хуçалăхра çак культурăна çуррине вăл акнă.

* * *

Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхри **Сергей ФОМИН,** кукуруза акаканскер, смена нормине 180 процент пурнăçлать, сахăр кăшманĕ акакан **Владимир КУЗЬМИН** вара - 160 процент.

* * *

Хафизов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри **Владимир ТУЙМЕШЕВ** сахăр кăшманĕ акнă çĕрте смена нормине 160 процент пурнăçлать.



*Выльăх-чĕрлĕх пăхакан Елена Леонидовна Короткинан ĕç стажĕ чĕрĕк ĕмĕр ытла шутланать. Çав çулсенче вăл пуян опыт пухнă, юлташĕсен хисепне тивĕç пулнă. Хальхи вăхăтра Елена Леонидовна хресченсен хуçалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн Анат Чаллăри фермин чи лайăх доярккисен шутĕнче. Халь вара кашни ĕнерен талăкра вăтамран сĕт суса илни 15 килогрампа танлашсан, Короткинан ушкăнĕнче сăвăм пĕр пăта çитет.*

*Ӳкерчĕкре: Е.Л.Короткина доярка.*

## ҮККра экзаменсем

**Çак кунсенче "Нурлатнефть" НГДУн вĕрентӳпе консультаци пунктĕнче экзаменсем пыраççĕ.**

НГДУ кадрсене хатĕрлес ыйтăва пысăк тимлĕх уйăрать. Кунти УКК "Татнефть" АОн ытти УККсем хушшинче паллă вырăн йышăнни те çакна çирĕплетет. Иртнĕ çул конкурса хутшăнса вăл пĕрремĕш вырăн йышăннă, куншăн ăна компьютер класĕпе наградăланă. Комбинат специальноçсен лицензийĕсене кашни çул ӳстерме тĕллев лартнă. Хальхи вăхăтра вĕсем 36. Пĕлтĕр УККра 1014 рабочи професси хатĕрленĕвĕ иртнĕ. Вĕсенчен188-шĕ пĕрремĕш хут специальность илнĕ. Ертӳçĕсем, специалистсемпе служащисем хушшинче 72 çын квалификацие ӳстернĕ.

Кăçал УККра 353 çын çĕнĕ профессин вăрттăнлăхĕсене алла илнĕ. Вĕсенчен 288-шĕ рабочисем. Малашне вĕсем экзаменсене кирлĕ пек тытĕç. Кунта вĕсем специальность тĕлĕшпе хăйсен пĕлĕвĕпе пултарулăхне кăтартĕç, экзаменаторсем кашни хурава питĕ çирĕп хак парĕç. Хăш-пĕр чухне пĕрремĕш хутрах экзаменсем парайман тĕслĕхсем те пулаççĕ. Çапла акă, электросварщиксен ушкăнĕнчи 16 çынран 6 çынна, нефть уçлама хатĕрлекен операторсен ушкăнĕнчи 42 çынран 5-шне тепĕр хут хатĕрленме тивнĕ.

## Нурлат районĕнче пурăнакансене пĕлсе тăма

"Астăвăм" кĕнекин республикăри редакцийĕ Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче вилнĕ е хыпарсăр çухалнă Нурлат (Октябрь) район çыннисен, анчах тухнă кĕнекене кĕртменскерсен, хушма списокне пичетлеме хатĕрленет.

Çавна май тăванĕсем вилнĕ е хыпарсăр çухалнă çынсен хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, миçемĕш çулта çуралнине, пурăннă вырăна, хăш çар комиссариатĕнчен вăрçа кайнине, вилнĕ хучĕн копине (çар комиссариатĕнчен илмелле) тĕрĕс кăтартса, редакцие çак адреспа çыру ямалла: **Хусан хули, Кремль, "Астăвăм" кĕнекин редакцийĕ.**

**И.САНДЛЕР.**

## "Тухăç-98" пресс-центр пĕлтерет

Халь, сахăр кăшманне тата силослăх кукурузăна юлашки гектарсем çине акнă вăхăтра, çурхи культурăсен лаптăкĕсене минераллă удобренисемпе апатлантарас ĕçе хăвăртлатмалла. Çав вăхăтрах кĕрхи культурăсене иккĕмĕш хут апатлантарма та васкамалла, мĕншĕн тесен ăшă кунсем тăнипе питĕ хăвăрт ӳсеççĕ. Çакна лайăх ăнланакан хуçалăхсенче вĕсене хушса апатлантараççĕ. Кунта малтанхи пекех "Киклĕ", Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Комбайн", "Родина", "Рассвет", Синдряков ячĕпе хисепленекен, Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем активлăх кăтартаççĕ. Районта кĕрхи культурăсене пилĕк пин гектар ытла лаптăк çинче иккĕмĕш хут, çурхи культурăсене те çавăн чухлĕ лаптăк çинче апатлантарнă, "Тан", Кузнецов ячĕпе хисепленекен, "Черемшан", "Игенче" ассоциацисенче, РСУн хушма хуçалăхĕнче тата ыттисенче çак ĕçе хăвăртлатсан, пуян тухăç ӳстерес шанăç тата та ытларах пулĕччĕ. Хушса апатлантарма удобрени çителĕклĕ. "Агрохимсервиса" аммиак селитри чылай илсе килнĕ.

## "Ильдан" фирма

Акă Хусанти "Ильдан" фирма представителĕсем пирĕн пата, Нурлата иккĕмĕш хут килчĕç, вĕсем халăха хĕллехи тата кĕрхи тумсен анлă ассортиментне сĕнеççĕ. Хальхинче вĕсем тĕрлĕ тиртен çĕленĕ çухасемлĕ хĕллехи пальто, çĕлĕксем, кĕрĕксем, кĕркунне тăхăнмалли пальто илсе килнĕччĕ. Тавар туянакансене таварсене 30 процент чакарса сутни илĕртрĕ. Нурлатра пурăнакан хĕрарăмсем уйрăмах хĕллехи пальто тата çĕлĕксем туянчĕç. Фирма ĕçченĕсене çĕнĕ заказсем пачĕç.

## Ветерансене удостоверенисем пама тытăннă

Майăн 20-мĕшĕнче Нурлатра ветеранăн удостоверенине хулари пĕрремĕш икçĕр çынна панă. Документсене столицăна çулталăк каялла ярса панă, анчах власть коридорĕсем ку хутĕнче вăрăмрах пулнă, республикăри ветерансен списокĕсене пин-пин çынна кĕртнĕ вĕт, районсемпе хуласем вара сахал мар. Çапах та нурлатсене те черет çитрĕ. Вăрахчен кĕтнĕ куна социаллă хӳтлĕх управленийĕ удостоверенисене йăлана кĕнĕ тăрăх парассинчен пăрăнма шутларĕ те пенсионерсем валли чăн-чăн уяв йĕркелерĕ. Концерт программине те, сăмах тухса калассине те пăхса хăварнăччĕ.

Иртен Çамрăксен центрĕ умĕнче яланхи пекех "Ветеран" хорăн юррисем янăрарĕç, каярах администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин пурне те ăшшăн саламларĕ. Официаллă пай умĕн тăхтавра ветерансен Хусан хăнипе - хăй тĕллĕн композиторпа тата юрăçăпа Суюмбике ханум Валеевапа паллашма май пулчĕ. Вунтăваттăра вăл фронта тухса кайнă, Кенигсберга штурмланă, стрелковăй взвод командирĕ пулнă, ултă хутчен аманнă, 1947 çулччен амăшĕ хĕрĕ вилнĕ тесе шутланă... Офицер картусĕ айĕнчи хĕрлĕ кăтра çӳç, хăмăр симĕс тĕслĕ гимнастерка, кăкăр тулли медальсем, янăравлă сасă, çынпа хăвăрт пĕр чĕлхе тупма пĕлни - миçе çулта пулни творчествăна чăрмантарма пултарать-и? Поэтсен çичĕ пуххин авторĕ, Суюмбике ханум хăйне итлекенсем валли темиçе юрă юрласа пачĕ, çав шутра хăйĕннисене те, хăй аккомпанементласа.

Ветерансене удостоверенисем социаллă хӳтлĕх управленийĕн начальникĕ Л.Н.Дильмухаметова пачĕ, вĕсене пурне те ырă сунчĕ.

Укçа-тенкĕ çинчен каласан, ветеран удостоверени хуçисем коммуналлă услугăсемшĕн тата телефоншăн 50 процент çеç тӳлеççĕ. Кăна ветерансем çинчен калакан 1995 çулхи январĕн 12-мĕшĕнчи Федераллă Закон тата Тутарстан Республикин финанс тата собес Министерствисен пĕрлехи çырăвĕнче çирĕплетнĕ. Финанс тĕлĕшпе паллах ĕнтĕ, йывăрлăхсем пулĕç.

Ветеран удостоверенийĕсене парасси хулара тата районта малалла пырать.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

## Тав тăватпăр

Çамрăксен çурчĕн питĕ илемлĕ залĕнче савăнăç, ыр-кăмăллăх лару-тăрăвĕ, хаваслă музыка, баян каланă май юрăсем янăрани, такмаксем шăрантарни вăрахчен асра юлĕ, вĕсем çамрăк мар çынсене хăйсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, кăткăс ыйтăвĕсем çинчен вăхăтлăха мантарчĕç, сывлăх хушрĕç, "фронтри" 100 грамм та ытлашши пулмарĕ.

Уява йĕркелекенсене, чи малтан социаллă хӳтлĕх управленийĕн коллективне, çаплах Çамрăксен çурчĕн ĕçченĕсене "Туслăх" хаçат урлă чунтан тав тăвасшăн - вĕсем хăйсем тараватлă хуçасем пулнине тепĕр хут кăтартрĕç.

Пурне те çирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

**Ĕç ветеранĕсен ятĕнчен Л.ТАФЕЕВА.**

## Археологсем Кислевре

Кислев ялĕ йĕркеленнин вăхăчĕ çинчен историллĕ сведенисем республикăри наука çыннисем хушшинче тĕрлĕ тавлашусем çуратрĕç. Камăн енче тĕрĕслĕх тата районăн, республикăн историллĕ летопиçĕнче Кислев мĕнле вырăн йышăнать, çакна уçăн пĕлес тесе майăн 15-мĕшĕнче Тутарстанăн истори институчĕн Академийĕ вырăнта наука тĕпчевĕсем пуçланă. Çак кунсенче ТРАМ археологи наци центрĕн представителĕсем - наука сотрудникĕ, истори наукисен кандидачĕ Айрат Маратович Губайдуллин тата кĕçĕн наука сотрудникĕ Ильгизар Равилевич Газимзянов Кислев ялĕнче, çаплах унăн çывăхĕнче археологи шыравĕсем ирттереççĕ. Экспедицире тупнă япаласем, вăл ирттерекен ĕç çинчен эпир вулакансене çитес номерсенчен пĕринче пĕлтерĕпĕр.

